# Сиплевсĕ



## ● Ыйту-хурав

### Выçă тытни тĕп вырăнта мар

**Нарăсăн 15-мĕшĕнче православи тĕнне ĕненекенсемшĕн вăраха тăсăлакан Аслă типĕ пуçланчĕ. Турра ĕненекенсен çак кунсенче мĕнлерех апатланмалла?**

**А.КУЗЬМИН.**

Аслă типĕре аш-какайран, сĕт-çуран, çăмартаран хатĕрленĕ апат çиме юрамасть.

1, 4, 7-мĕш эрнесенче тунти кунран пуçласа эрне кун апата кăштах ÿсен-тăран çăвĕ хушса çимелле. 2, 3, 5, 6-мĕш эрнесенче рационта çу пулмалла мар.

Шăмат тата вырсарни кунсенче апата ÿсен-тăран çăвĕпе хатĕрлемелле. Кăчкă праçникĕнче /Вербное воскресенье/ тата Пăлхавăшнире /Благовещение/ пулă çиме юрать.

### Сухан

Бронхит, коклюш чухне сухан лайăх пулăшать. Çур килограмм вĕтĕ туранă сухан, 50 грамм пыл, 400 грамм сахăр песукĕ илмелле. 1 литр шыва ярса вăйсăр çулăм çинче 3 сехет пĕçермелле. Кунне 4-5 хут 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле.

Сухан сĕткенĕпе шĕпĕне пĕтерме усă кураççĕ, ăна кашни кунах сĕткен сĕрмелле. Çавăн пекех сухан çÿçе çирĕплетет. Эрнере 2 хутчен 2-3 апат кашăкĕ сĕткенпе çÿçе сăтăрмалла, пуçа тутăр çыхмалла. 1-2 сехет иртсен çÿçе ăшă шывпа çумалла.

Хĕллехи шартлама сивĕре ÿте тăм илтересси те часах. Кунта та сухансăр май çук. Тăм илтернĕ вырăнсене теркăпа хырнă суханпа сăтăрма сĕнеççĕ. Сунас чухне çакнашкал суханах марля ăшне хурса сăмса шăтăкĕсем тĕлне 10 минут тытмалла.

### Хурăнпа тирек çулçи

Çуркунне хурăн çинчи пĕчĕк çеç çулçăсене татмалла. Вĕсене тĕттĕм тĕслĕ кĕленче савăта хумалла, шурă эрех ярса çутă лекмен вырăна лартмалла. Çур литрлă кĕленче валли 300-350 грамм шурă эрех çителĕклĕ. Шăнса пăсăласран сипленмелли эмел пĕр эрнерен хатĕр. Калăпăр, урамра шăнсан каçхине 1 чей кашăкĕ хутăша ĕçмелле те çывăрма выртмалла.

Ÿпке сывă мар чухне тирекĕн çуркунне тин çеç тухнă çулçи кирлĕ. Эмеле эпир çÿлерех çырса кăтартнă мелпех хатĕрлемелле. Малтанах 1-ер чей кашăкĕ ĕçмелле, каярах çурри те çителĕклĕ. Ÿпке шыççи е бронхит чухне лайăх пулăшать.

Хурăнпа тирек настойкисем нумай çул упранаççĕ. Шĕвек пĕтсен унта тепĕр хут шурă эрех ярса усă курма пулать.

## ● Ансат мелпе

### Вăй пĕтсен

1 чей кашăкĕ шăлан çырлине /типĕтни/ вĕтетмелле, эмаль савăта ярса вĕрекен 250 миллилитр шывпа хутăштармалла. Вăйсăр çулăм çинче 10 минут тытмалла. 1 талăкран сăрăхтармалла. Шĕвеке 1 чей кашăкĕ пыл хушса пăтратмалла. Кунне 3 хут апатчен 15-20 минут маларах 1-ер апат кашăкĕ ĕçмелле. Япаласен ылмашăвне лайăхлатать, вăй пĕтсен, юн сахаллансан усăллă.

## ● Сывлăх апачĕ

### Купăста катлечĕ

125 грамм вĕри сĕте вĕтĕ туранă 1 килограмм купăстапа хутăштармалла, пĕçермелле. 100 грамм манна кĕрпи ярса пĕрмаях пăтратса тата 10 минут пĕçермелле. Çулăм çинчен илсе 3 çăмарта сарри, тăвар хушмалла, лайăх пăтратмалла. Сивĕнсен катлетсем тумалла, çăмарта шурринче, вĕтетнĕ сухарире йăвалантармалла. Икĕ енчен те ăшаламалла.

## ● Пĕлме интереслĕ

### Кĕмĕл шыв

XIX ĕмĕртех кĕмĕл шыв тĕрлĕ бактерие пĕтерме пултарнине тупса палăртнă. Ăна килти условисенче хатĕрлемелли чи ансат мел – кĕмĕл япалана çулăм çинче хĕртмелле, шыв тултарнă графина ямалла. Фарингит, ангина, пародонтоз, стоматит чухне çăвара çак шывпа чÿхемелле. Кашни кунах кĕмĕл шывпа çăвăнни пит ÿчĕшĕн лайăх. Куç çине çакнашкал шывпа йĕпетнĕ салфеткăсем хуни конъюнктивитран сипленме пулăшать.

### Экземăран

Шыв мунчинче 200 грамм услам çу тата çурта ирĕлтермелле. 1 сухан сĕткенĕ хушмалла, лайăх пăтратмалла. Сивĕнсен мамăкпа пуçа-пуçа илсе чир сиенленĕ вырăнсене сăтăрмалла.

Иккĕмĕш рецепт. Аптекăра хăлха çакки курăкĕн /одуванчик/ типĕтнĕ тымарĕнчен хатĕрленĕ çăнăх туянмалла. 1-ер кашăк çăнăхпа пыл илсе хутăштармалла, çывăрма выртас умĕн ÿте сĕрмелле.

### Усăллă канашсем

● Ананас, мăн хăяр /кабачок/, купăста çини ытлашши виçерен хăтăлма пулăшать.

● Ытлашши виçе сыпăсемшĕн уйрăмах сиенлĕ.

● Тинĕс купăсти /ламинари/ нумай эмел тытăмне кĕрет.

● Пахча çимĕç сĕткенĕсен хутăшĕсем стенокарди аталанасран сыхланма пулăшаççĕ.

● Кашни кунах кăштах та пулин пыл çини ĕçлес пултарулăха ÿстерет, ыйха йĕркене кĕртет.

● Сĕтпе танлаштарсан кефир организмра лайăхрах ирĕлет.

● Вăта пÿрнене çĕрĕ чылай вăхăт тăхăнса çÿресен атеросклероз, гипертони аталанма пултараççĕ.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

## 73 çул пĕрле

**100 çулхи юбилей çын пурнăçĕнче калама çук пĕлтерĕшлĕ пулăм. Шел, ăна паллă тума нумайăшне пÿрмен. Пурнăç опычĕн, ырлăхпа ăшăлăх çăл куçĕн, тÿсĕмлĕхпе чăтăмлăх, ăс-тăн праçникĕ вăл.**

**Улатăр районĕнчи Чуварлей салинчи Иван Михайлович Земсков çак кунсенче 100 çул тултарнине паллă тунă. Вăл Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ, танкист. Мăшăрĕпе Мария Федоровнăпа 73 çул пĕрле пурăнать. Кил хуçи хĕрарăмĕн те çулĕсем сумлă – 97-ре.**

**Вăрçă хыççăн Иван Земсков Улатăрти автотранспорт предприятийĕнче водительте вăй хунă. Арăмĕ кил-çурта тытса тăнă, ачисене воспитани панă. Земсковсем 5 ача пăхса ÿстернĕ. Çемье телейĕн вăрттăнлăхĕ – пĕр-пĕрин шухăшне тĕпе хуни, савăнăçпа хуйха пĕрле пайлани, пурнăçа, çынсене юратни. Нумай çул пурăнасси вара йăхран йăха куçса пырать. Иван Михайловичпа Мария Федоровнăн ашшĕпе амăшĕ те пĕрер ĕмĕре яхăн пурăннă.**

**Хисеплĕ мăшăра çак кунсенче Улатăр хулин ЗАГС пайĕн пуçлăхĕ Юлия Каюкова, Татьяна Мурьева специалист ăшшăн саламланă.**

**Р.ВЛАСОВА**

## ● Юбилей

# Юрий Илюхин – пĕрремĕшсенчен пĕри

**Темиçе кун каялла Раççей культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Ен искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, РФ Композиторсен союзĕн членĕ Юрий Илюхин 85 çул тултарчĕ. Музыка искусствине аталантарма нумай çул хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн ăна ЧР Президенчĕ Николай Федоров тав тунă. Тав хутне юбиляра ЧР культура министрĕ Роза Лизакова панă.**



Юрий Илюхин – чăвашсен хушшинчи пĕрремĕш профессионал музыковед. Унăн пултарулăхпа çыхăннă ячĕ унчченхи ССР Союзĕнче кĕрлесе тăнă, халĕ те ятсумĕ Раççейре те, Чăваш Енре те пысăк. Юрий Александрович Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин ветеранĕ. Паттăр салтак II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденне икĕ хут тивĕçнĕ. Аслă Çĕнтерÿ хыççăн Шупашкарти музыка училищине вĕренме кĕнĕ, ун хыççăн пĕлĕвне Хусан патшалăх консерваторийĕнче теорипе композитор факультетĕнче туптанă. Музыка тĕпчев ĕçне вара Чăваш патшалăх ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче /1956-1961/ пуçăннă.

Юрий Илюхин ячĕ тăван искусствăпа тата культурăпа тачă çыхăннă. Вăл чăваш халăх кĕвĕçеммин тата профессионал музыкăн пропагандисчĕ, 1200 ытла статья, рецензи, 27 ăслăлăх ĕçĕ çырнă. Çакскерсенчен пысăк пайĕ вырăнти тата тĕп пичетре кун çути курнă. Пĕри, сăмахран, Болгари Ăслăлăх академийĕн кăларăмĕнче пичетленнĕ.

Юрий Александрович "Музыкальная культура Чувашии. Чувашская народная музыка" /1961/, "Композиторы Советской Чувашии" /1978/, "Григорий Хирбю" /1985/ кĕнекесен авторĕ. Çавăн пекех "Чувашские народные песни. 620 песен и мелодий, записанных от Гаврила Федорова" /1969/ кăларăма хатĕрленĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл чăвашсен профессионал музыкине никĕслекенсенчен пĕрне Ф.П.Павлова тĕпчекенсен йышĕнче. Унăн статйисем пилĕк томлă "История музыки народов СССР" кĕнекере те пичетленнĕ.

Республикăри вĕренÿ заведенийĕсенче Ю.Илюхинăн "Чувашская народная музыка" пособийĕпе усă кураççĕ. "Краткая чувашская энциклопедия" /2001/ кăларăмра унăн 128 статйи пичетленнĕ. Чăваш энциклопедийĕн I-II томĕсенче те пур вĕсем. "Чăваш Республикин Президенчĕн библиотеки" ярăмпа тухакан çиччĕмĕш томра – "Мастера музыкального искусства" кĕнекере – Юрий Александровичăн очеркĕсене те вырăн панă.

Тăван фольклора тĕпчес тĕлĕшпе те сахал мар ĕçленĕ юбиляр. Чăваш Енпе Тутарстанри, Самарпа Ульяновск облаçĕсенчи чăваш ялĕсенче 400 ытла халăх юррине çырса илнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕ икĕ томлă "Песни низовых чувашей" кĕнекене кĕнĕ. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенче венгр музыковечĕсемпе Ласло Викарпа, Габор Берецкипе республика районĕсенчи фольклор экспедицийĕсене хутшăннă. Пуçтарнă материала Будапештра пичетлесе кăларнă. "Чувашские народные песни" кĕнекене 350 юрă кĕнĕ.

Юрий Илюхин общество ĕçĕнче те палăрнă, чылай вăхăт Чăваш Ен Композиторсен союзĕн правленийĕн яваплă секретарĕ пулнă. Педагогика ĕçĕнче хастарлăх кăтартнă, 1955-1979 çулсенче Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче вĕрентнĕ. Унăн вĕренекенĕсенчен уйрăмах палăрнисем: Пĕтĕм тĕнчери конкурссен лауреачĕсем, Раççей халăх артисчĕсем Анатолий Любимов гобоист, Виктор Галкин валторнист, искусствоведени докторĕ Михаил Кондратьев музыковед, Александр Васильев композитор, Валерий Важоров дирижер тата ыттисем.

**Надежда СМИРНОВА**

## ●Курав-ярмăркка

# Шурă Руçре – чăваш кĕнекисем

**Кăçалхи нарăсăн 10-14-мĕшĕсенче Беларуç Республикин тĕп хулинче çĕршывсен хушшинчи 17-мĕш кĕнеке выставки-ярмăркки ĕçленĕ. Унта Раççей, Франци, Китай, АПШ, пурĕ 26 çĕршыв, хутшăннă. Чăваш кĕнекисене асăннă форумра Раççей Кĕнекеçисен ассоциацийĕн стенчĕ çинче кăтартнă. Курав-ярмăркка пирки Чăваш кĕнеке издательствин директорĕнчен В.П.Комиссаровран каласа кăтартма ыйтрăмăр.**




**– Валерий Петрович, 17-мĕш кĕнеке курав-ярмăрккине кам пулăшнипе йĕркеленине тата унăн хăй евĕрлĕхĕ çинчен пĕлес килет. Тата, паллах, чăваш кĕнеки унта хутшăннин пĕлтерĕшĕ пирки те.**

– Йĕркелÿçисем – РФ Пичетпе массăллă коммуникаци хатĕрĕсен агентстви, Çĕршывсен хушшинчи кĕнеке куравĕсемпе ярмăрккисен генеральнăй дирекцийĕ /Мускав/, Беларуç Республикин Информаци министерстви. Курав-ярмăрккан пĕрремĕш кунĕ Раççей наци экспозицийĕ уçăлнипе çеç мар, тĕрлĕ мероприятипе асра юлчĕ. Сăмахран, Михаил Веллер писатель пресс-конференци ирттерчĕ, унăн çĕнĕ "Легенды Арбата" кĕнекин презентацийĕ пулчĕ.

**– Шурă Руç тăрăхне илсе çитернĕ кĕнекесем камăн ĕçĕсем?**

– "Халăх ăстисен опытĕнчен" ярăмпа пичетленнисемпе уйрăмах кăсăкланчĕç. Çавăн пекех икĕ томлă "Чуваши: история и культура" коллективлă монографие, "Чăваш юмахĕсемпе халапĕсене", "Улăпа", "Приглашение к сотрудничеству" кăларăма куç хывакансем йышлăччĕ.

**– Минскра пурăнакан йăхташăмăрсем, пирĕн культурăпа, йăла-йĕркепе кăсăкланакансем пырса курчĕç-и?**

– Курав-ярмăрккан иккĕмĕш кунĕнче РФ наци стенчĕн конференц-залĕнче "Чăваш кĕнеки диаспорăра. Опытпа çивĕч ыйтусем" темăпа семинар иртрĕ. Ăна йĕркелес ĕçе Чăваш кĕнеке издательствисĕр пуçне РФ Пичетпе массăллă коммуникаци хатĕрĕсен агентстви, Çĕршывсен хушшинчи кĕнеке куравĕсемпе ярмăрккисен генеральнăй дирекцийĕ хутшăнчĕç. Малтанах шикленнĕччĕ те: семинара килекенсем пулĕç-ши тесе кулянăччĕ. Кăлăхах пăшăрханнă иккен. Куравăн иккĕмĕш кунне Чăваш Ен кĕнекисен стенчĕ умне наци тумĕ тăхăннă пикесем çитсе тăчĕç. Вĕсене ертсе килекенĕ Беларуçри чăвашсен "Атăл" общество пĕрлешĕвĕн ертÿçи Геннадий Александров пулчĕ. Тĕп телекуравăн 1-мĕш каналĕн, СТС каналăн журналисчĕсем интервью илчĕç, чăваш кĕнекисемпе капăр тумлă хĕрсене ÿкерчĕç. Йăхташсемсĕр пуçне библиотекарьсем, кĕнеке палатин ĕçченĕсем, ăсчахсем тата ыттисем килчĕç. "Чăваш кĕнеки диаспорăра" доклад хыççăн туслă, ĕçлĕ калаçу пуçланчĕ.

Курав-ярмăркка условийĕсемпе килĕшÿллĕн стендри кĕнекесене Беларуç Республикин Информаци министерствине парса хăвармаллаччĕ. Унăн ертÿçисемпе калаçса татăлнă хыççăн вĕсене "Атăл" общество пĕрлешĕвне парнелерĕм.

**– Кĕнеке туянас текенсем пулчĕç-и?**




– Чăвашсем çеç мар, ытти халăх çыннисем те сутма ÿкĕтлерĕç. Анчах унашкал куравсенче суту-илÿ тумаççĕ, кĕнекесене те пĕрер çеç илсе кайнăччĕ. Ентешсене тăван халăх историйĕ кăсăклантарать. Сăмахран, Ирина Орловскаяпа паллашрăм. Унăн аслашшĕ чăваш, вăрçă хыççăн Беларуçрех юлнă, авланнă. Ирина Юрьевна, паллах, чăвашла пĕлмест, апла пулин те тăванлăх туйăмĕ сÿнмен унра, "Чуваши: история и культура" монографие питĕ туянасшăнччĕ. Вăл хăйĕн йăхнесĕлĕн йывăçне тума ĕмĕтленет. Искусствоведсем, ал ĕç ăстисем чăваш тĕррипе, пир тĕртессипе, йывăçа касса эрешлессипе çыхăннă кĕнекесемлĕ пуласшăнччĕ. Эпир вĕсене почтăпа ярса парăпăр.

**Надежда ГЕОРГИЕВА калаçнă**

## Паян «Сывлăх» хаçатăн çĕнĕ номерĕ пичетленсе тухрĕ




- Пĕçертекен "эмел".
- Псориазран – хурăн çырлипе.
- Клевер температурăна чакарать.
- Пÿре шыççинчен хура çырла çулçи витĕмлĕ.
- Сывлăхшăн усăллă типĕ.
- Халăх мелĕсем чир вĕрĕлесрен пулăшаççĕ.
- Вар хытнипе кĕрешме.
- Шăнтмăшри паха аптека.
- Сиплĕ металл витĕмĕпе.
- Психолог канашĕ: "Тĕнчене улăштарма хăтланса..."
- Кукшаланасран курăксем хÿтĕлеççĕ.
- Невроз чухне кăмăла лайăхлатма.
- Алла çемçетекен бальзам.
- Ĕнсе мĕншĕн ыратать?
- Хырăмлăх чирĕсем пурнăç йĕркипе çыхăннă.

## Раççей чемпионатне хатĕрленеççĕ

Мари Республикин Йошкар-Олара иртнĕ уçă чемпионатĕнчен сетокан-каратэ мелĕпе кĕрешекен пирĕн спортсменсем пысăк çитĕнÿпе таврăннă: Чăваш Республикин каратэ федерацийĕн /ертÿçи В.Тимофеев/ пĕрлештернĕ команди пĕтĕмĕшле зачетра пĕрремĕш вырăна тухнă, 18 медаль /7 "ылтăн", 6 "кĕмĕл", 5 "пăхăр"/ çĕнсе илнĕ. Чăваш Ен командинче 19 кĕрешÿçĕ пулнине шута илсен кашнинех пĕрер медаль тивĕçнĕ.

Чемпионатра хăйсен ушкăнĕнче çĕнтерÿçĕсен йышне кĕнĕ Аслан Тимофеев, Юрий Сапожников /Çĕнĕ Шупашкарти 1-мĕш ДЮСШ/, Иван Дементьев, Валерия Швецова /Шупашкарти 3-мĕш ДЮСШ/ халĕ пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче Мускав хулинче иртекен Раççей чемпионатĕнче кĕрешме хатĕрленеççĕ.

**Ю.ЛИСТОПАД**

## ● Суд залĕнчен

# Ертÿçĕ ултав çулĕ çине тăнă

**159, 174.1, 196, 201, 199, 145.1 – Уголовнăй кодексăн çак статйисемпе Александр Алексеева айăпласçĕ. Уголовнăй ĕçе Çĕнĕ Шупашкар хулин сучĕ тишкерет.**

А.Алексеев – 49 компани ертÿçи тата учредителĕ. Унăн фирмисем тĕрлĕ-тĕрлĕ сферăра ĕçлеççĕ: строительствăран пуçласа типографипе çыхăннă пулăшу ĕçĕсем таранах. Малтанхи следстви органĕсем тăратнă айăплав та питĕ анлă: уйрăмах пысăк виçепе çыхăннă ултав, преступлени туса пухнă тупăша служба вырăнĕпе усă курса легализацилени, предприятие ятарласа панкрута кăларни, налук тÿлессинчен пăрăнни, ĕçлекенсене вăхăтра шалу тÿлеменни.

Унăн айăпĕпе панкрутлăх шурлăхне кĕрсе ÿкнĕ организаци – "Паха тĕрĕ" фирма. Алексеевăн "Рубикон" ТК фирми "Уралсиб" банкран 40 млн тенкĕлĕх кредитсем илнĕ. Салука вара "Паха тĕрĕн" 70,5 млн тенкĕлĕх куçми пурлăхне хывнă. Кайран "Рубикон" банк умĕнчи обязательствисене пурнăçлайман, çавна май парăм "Паха тĕрĕ" пурлăхĕ çине куçнă. Унсăр пуçне Алексеев çак фирмăн 2,1 млн тенкĕ укçине вăрланă тесе шутлаççĕ. Çак укçана çĕвĕ фабрикин ятарлă тумтир çĕленĕшĕн "Промстроймаркет" ОООран илмелле пулнă. Айăплав пĕтĕмлетĕвĕнчен паллă: Алексеев хушнипе "Паха тĕрĕ" бухгалтерийĕ заказчикрен илнĕ укçана унăн амăшĕн банкри шучĕ çине куçарнă, кайран хĕрарăм çак укçана ывăлне панă. "Паха тĕрĕ" фирма саккаса пурнăçлайманнине кура "Промстроймаркет" ЧР Арбитраж судĕнче тĕрĕслĕх шыранă, суд пĕлтĕрхи çу уйăхĕнче "Паха тĕрĕ" панкрут тесе йышăннă, ун пирки конкурс производстви пуçарнă.

Çавнашкал мелпех Алексеев Шупашкарти "Про-металл" ОООн 2,6 млн тенкĕ ытла укçине те хăйĕн кĕсйине чикнĕ. Ку тĕслĕхре "Новолак" ПКФ" ООО панкрутлăх патне пырса тухнă. "Новолакăн" металл япаласен цехĕпе администраци корпусне – пĕтĕмпе 18 млн тенкĕлĕх – "Про-метала" сутасси çинчен килĕшÿ тунă.

Суд кĕçех хăйĕн вердиктне палăртĕ.

**Н.ДМИТРИЕВ**


Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерÿ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ.

**1 марта** Чувашская государственная филармония **начало 18.30**
**Концерт народной артистки Чувашской Республики Светланы Бубновой** и Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца.
Справки по тел.: 62-14-83, 62-54-48.

**ПРОДАЮ**

**4.Трактора** МТЗ-82, **косилки,** пресс-подборщики, **грабли, сажалки, окучники.** Все новое. Т.: /8352/ 406765, 89053451095.

**25. Гравмассу,** керамблок, песок, кирпич силикатный, торф. Доставка. Т.89023277585.

**57.Гравмассу,** щебень, **песок, керамзит, цемент, торф** – до 30т. за рейс. Недорого. Сезонные скидки. Тел.: 387015, 89276656129.

**УСЛУГИ**

**63.Поможем построить дом!** Все бесплатно: консультации – вт.,чт., сб. в 14.00; современные технологии и материалы; готовые проекты домов. **Тел.: 30-55-10, 30-55-54.** Адрес: г.Чебоксары, Канашское шоссе, д. 7/1, ТК «Терминал».

**84.Анонимное лечение алкогольной зависимости.** А.: Чебоксары, пр. Ленина, 32А. Т. 551725, 670817, 551660, 501364. Лиц. Росздравнадзора 21-01-000261 от 31.01.08г. *Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**95.Памятники.** Т. /8352/ 35-10-83.



чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР



УЧРЕДИТЕЛЬ – "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ПАТШАЛĂХ УНИТАРИ ПРЕДПРИЯТИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистрациленĕ.
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Генеральнăй директор – тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Тĕп редактор çумĕ – шеф-редактор Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /генеральнăй директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА
Дежурнăй редактор И.Н.КЛЕМЕНТЬЕВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – генеральнăй директор-тĕп редактор,
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ, шеф-редактор,
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ, коммерци директорĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь,
28-85-87 – яваплă секретарь çумĕ,
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ,
56-05-21, 56-22-31, 28-83-67 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ,
56-08-62 – экономика пайĕ,
56-03-04, 28-85-91, 28-85-33 – социаллă пурнăçпа вĕрентÿ пайĕ,
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ,
56-04-26 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ,
28-82-91 – корректорсем, 56-45-94 – фотокорреспондент,
бухгалтери – 28-83-64,
hypar2008@rambler.ru
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ,
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ,
корр. пунктĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай, /8-835-32/ 6-11-82 – Патăрьел,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç.
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07.
Электрон почти: pop408@rambler.ru hypar@chtts.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» ПУП компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел.: 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8140. Заказ 395.